К С(ЧУВ)
Ю41
16955-ЧУВ

Самрăк сăмăсем

Геннадий Юмарт

ТИВĔÇ

К С(7УБ)
Ю 41

ГЕННАДИЙ
ЮМАРТ

ТИВЁҪ

САВАСЕМ

ЧĂВАШ АССР КЁНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1969



Г. Юмарт (Трофимов) 1938 çулта Чăваш АССРĕнче, Красноармейски районĕнчи Кайри Карăк ялĕнче çуралнă. Красноармейскинчи вăтам шкултан, Чăваш патшалăх педагогика институтĕнчен вĕренсе тухнă. 1961—65 çулсенче Куйбышев облаçĕнчи чăваш ялĕсенче учительте ĕçленĕ. 1965 çултанпа вăл — Чăваш кĕнеке издательствин илемлĕ литература редакторĕ.

«Тивĕç» — поэтăн пĕрремĕш кĕнеки.

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ
РЕСПУБЛИКИ

М 16955-ЧУВ.

ÇЕÇПЁЛ

Ăна асилсессĕн — хĕçсем чанклатса
Хаярăн ялтраççĕ çеçенхирсенче,
Çураç хăлхана тупăсем ухлатса,
Ача выçăпа макăрать сак çинче.

Кышлать шелсĕр çулăм чипер çуртсене,
Тусан çулсем тăрăх пал-пал! хăпарать.
Пĕртанлăх юрри Раççейрен тĕнчене
Пур тĕрлĕ юрра хуплас пек сарăлать.

Чăваш çĕрĕ-шывĕ çинче — хурçă сас.
Хĕвеллĕ ыр шанчăк чĕртсе вăл янрать,
Янрать Çĕнĕ Куншăн тăма йыхăрса,
Ав Çеçпĕл мĕлки улăп пек палăрать.

Илтетĕп поэтăн сулмак уттине —
Асар-писер çил те ăна хăруш мар.
Вут-хĕмлĕ ялав çĕкленет çĕр çине,
Юрлать пирĕн Çеçпĕл тăвăллă марш.

1959

ХУРАМА

— Сана аван-им, хурама,
Хирте хăр-тăлăххăн ларма!
Хĕн мар-и шăрăх кунсенче
Е шартлама хĕл сиввинче!
— Çук, ун пирки эп кулянман,
Кунта ним усăсăр ларман:
Пĕччен ӳссен те аякра,
Эп сулхăн панă шăрăхра.
Тăман хуплать-и тĕнчене —
Çул кăтартатăп çынсене.

1967

АННЕНЕ

Йăмра тăкатчĕ сарă ылтăн
Çуралнă килĕм умĕнче.
Мана ăсатрăн та эс юлтăн
Пĕччен тăрса уй хапхинче.

Пĕлетĕп: халĕ эс ĕçре те
Куллен мана аса илен,
Эс ыйхă витĕр тĕлĕкре те
Ывăлупа пĕрлех çӳрен.

Пĕлетĕп: почтальон иртет-и —
Салхун пăхса, çыру ыйтан.
Ахаль-и канăçсăр кĕтетĕн
Эс сăнӳкерчĕк те пулсан!

Ши! шăхăрса тăман шăлать-и,
Выртать-и хир ем-ешĕлех —
Пĕлетĕп, мансăр тунсăхлатăн,
Пăхса эп кайнă еннелле...

Лăплан, пĕрвĕçĕм ан хурлан эс,
Ан ыраттар çав тер чунна.
Эп инçерен ан пăшăрхан эс,
Ача шутне хурса мана.

Туять йышран юлми утсан çеç
Телейĕм çитессе чĕре.
Хăюллă ĕмĕтсем капланчĕç,
Чи ыр киленĕвĕм — ĕçре.

Ачушăн эс ялан ан хуçăл —
Инçе вĕçсен те çилпеле
Типшĕрĕнсе саралнă çулçă,
Ман чунăм туртăнĕ киле.

1959

АНЛĂЛАНЕ АТĂЛ

Кам-ши ярăнмашкăн килмĕ
Аслă шывăн ытамне!
Ыткăнать моторлă кимĕ
Хумлă Атăл леш енне.

Харсăр юрă эс пуçларăн
Хамăр çамрăклăх çинчен.
Таврара сассу янрарĕ,
Юхрĕ янкăссăн, çемçен.

Икĕ хум хыçа йĕрленчĕ,
Ик хăю пекех пулса.
Вĕсене тытма пикенчĕ
Вут-хĕвел, ишсе пырса.

— Эп сиссе те илеймерĕм,
Атăл урлă каçиччен
Юррăма та вĕçлеймерĕм,—
Терĕн леш енне çитсен.

— ГЭС тăвар кăна, чиперĕм,—
Тинĕс выртĕ сарăлса,
Сассуна та эс çĕтерĕн
Каçнă майăн юрласа.

1957

ШУРĂ ÇУМĂР

Шурă çумăр çăвать, шурă çумăр —
Кăпăк пек кăпăшка юр çăвать.
Вăтанать айкашма та çил хумĕ,
Пӳрт тăрри шурă тутăр çыхать.
Шурă çумăр çăвать, шурă çумăр,
Ай тăкать те тăкать, ай тăкать!

Юр пĕрчи вĕлтĕр-вĕлтĕр, хавассăн
Тытăнать киленсе çаврăнма.
Туйăнаççĕ мана тем калассăн —
Те чĕнеççĕ пĕрле выляма!
Çĕр çине лап ӳкмешкĕн хăймаççĕ,
Лăпкăн-лăпкăн анаççĕ ума.

Эп шур тĕлĕк çеç мар-и куратăп! —
Шур юр мар пуль çăвать таврара...
Хĕл мучи хĕрхенмесĕр тăкать-и
Çутă кĕмĕл тĕпренчĕк-тупра —
Калăн, савнă туса тĕл пулатăп —
Йăл кулса саламлатăп юра.

1965

ÇУЛ ÇИНЧЕ

Яка асфальтăн сарăмĕ —
Тӳлек Çавал инçечĕ пек.
Вăрман пек йывăç ярăмĕ
Юхса юлать ик енĕпе.

Пуçне таяççĕ хурăнсем
Эпир çулпа иртмессерен —
Лартса ӳстернĕшĕн вĕсем
Сума сăваççĕ чĕререн.

1959

КУН ПЕК ПАХИ МӖСКЕР ПУР-ШИ?

Ем-ешӗл çӗр, сенкер тӳпе
Хитре-çке пурнăç пуррипе.
Кун пек пахи мӗскер пур-ши?
Чи ыр илем çак çеç мар-ши?

Çаран утин шăрши — шерпет,
Хирте тырпул шăрши кӗрет.
Кун пек тутли мӗскер пур-ши?
Чи ыр сипет çак çеç мар-ши?

Аттемӗрсен çӗршывӗпе
Аттемӗрсен кил-çурчӗ пек
Хаклăраххи мӗскер пур-ши?
Чи ыр кӗтес çак çеç мар-ши?

1967

Ан тив асать шап-шур çанталăк,
Çил шăхăрать шух каччă пек,
Ан тив çитме инçе-ха ялăм —
Хурланмăп эп çул çуккипе.

Салхуллăн пралуксем янраççĕ,
Йăн-йăн юрлаççĕ юпасем.
Чуна лăпкаççĕ е çураççĕ,
Канăçлăха сирсе, вĕсем.

Сăхлантарать çак чăрсăр кĕвĕ,
Ăмсантарать хăй хăватне.
Утатăп çил-тăман çук евĕр,
Туймастăп кĕрт тарăннине.

1967

Лăпкă кăвакарчăн,
Кăн-кăвак куçсем...
Мĕншĕн эс тус мар-ши,
Çурăлан çеçкем!

Халиччен пулман та
Кунашкал шăпа —
Чĕрĕлсе вăрантăм
Санăн ăшшупа.

Чунăмри кăваршăн
Кӳрĕн-ши эс шар!—
Чĕрӳнте эп мар сан,
Çумăнта — эп мар.

Пурпĕр савăнатăп
Сан илемӳпе,
Пурпĕр туйăнатăн
Маншăн çуннă пек.

1959

КУРАҪ ТАМАНЕ

Тем ырришĕн, тем амакшăн,
Те йăли ун çавнашкал —
Хĕл пуçларĕ юр тăкмашкăн,
Юрĕ нӳрĕ, кăпăшка.

Шурă тĕнчере утатăн,
Шурă кун куçа шартать.
Юр кăна умра куратăн,
Юр кăна лаплаттарать.

Кураксем, эппин, килеççĕ
Çуркунне хыпарĕпе.
Вăрттăнрах иккен çитеççĕ
Çак тăманăн хӳттипе.

Сас парассăн туйăнаççĕ
Çывăхрах сисмен хутран.
Ахаль мар-тăр тунсăхлаççĕ
Йăмрасем вĕсем çукран...

Вашават сывпуллашать-мĕн
Сивĕ хĕл пирĕнпеле,
Чыс тумашкăн тарават-мĕн
Юлашки юрĕпеле.

Чыс тăвать курак тăманĕ,
Шеллемест хăй ырлăхне:
Курса юлăр, тет, ан манăр
Шурă юр тасалăхне!

1967

Утса çӳрер урамсемпе...
Ретшер çинçе юпа çинче
Мăн лампăсем каç пулттипе
Ялтраччăр-и юр тĕтринче,
Çӳретĕр халăх хĕвĕшсе —
Тинех пĕрле эс пулнипе
Сан сассуна çеç илешсе,
Хаваслăхпа çуталăп эп.
Сана кăтартăп вуласа
Юмах пек хӳхĕм сăвăсем.
Юр çăвĕ шăппăн ярăнса,
Шуралĕç сар автобуссем.
Систерĕп сăмах май сана
Эп хам çӳренĕ чух пĕччен
Кăп-кăпăш юр час-час мана
Салхуллăн курăнни çинчен.
Хура, çемçе çуху çине
Шур юр ачашшăн йăпшăнсан,
Эп унăн чĕлтĕрти сийне
Шăлса илкелĕп савăнса.

1960

Хĕвел вăратрĕ те каллех
Тумла янравлăхне,
Пĕр татăлми сăнас килет
Тӳпе сенкерлĕхне.

Чӳхенчĕç уççăн юррисем
Хаваслă кайăксен...
Чунра чи ăшă туйăмсем
Вăранчĕç çĕнĕрен.

Хам илейместĕп ăнланса,
Асамлăх-и пуртан —
Эп çĕмĕртсем çурăласса
Кĕтетĕп кăмăлтан.

1963

М 16955-ЧУВ.
Национальная библиотека
Чувашской
Республики

Хĕрхĕлтĕм, хĕрлĕ, кăвак
Çеçпĕлĕн чăрсăр çеçки.
Тусăм, пĕлетĕн хăвах
[Пĕр тăхтамасăр эс кил]:
Йывăç папки çурăлать,
Çӳл тӳпене талпăнса.
Çĕнĕ тĕнче уçăлать,
Пирĕншĕн ăшшăн çунса.

1962

Асилетĕп эс чуптунине,—
Чуптăваттăн çепĕççĕн, çемçен...
Эсĕ мар-и çăлтăн ун чухне
Черченкке чуна пĕчченлĕхрен!

Çӳремен эпир кӳл хĕрринче,
Уйăх çутатмастчĕ — пурпĕрех
Иккĕмĕш хутра, пусма çинче
Лайăхчĕ пире вĕсемсĕрех.

Телейӳ çитнишĕн тĕлĕнсе
Хĕпĕртеттĕн — ĕненсе ырра.
Эс мана аппа пек хĕрхенсе
Алă патăн кăмăллăн вара.

Пĕр-пĕрне яр-уççăн ăнланма
Кирлĕ марччĕ ытлашши сăмах.
Савăкчĕ кас-кассăн шăпланма,
Савăкчĕ куçран савса пăхма.

Ырнăччĕ пуль лампа çутатса,
Эс ыталаса çаплах ырман.

Ăшă-ăшă куçусем таса,
Пытармаççĕ вăрттăнлăх манран...

Ах, часах-çке темшĕн, тем тĕлне
Çĕтрĕмĕр эпир пĕр-пĕринчен...
Асилетĕп эс чуптунине,
Чуптăваттăн çепĕççĕн, çемçен.

1968

ÇУРХИ ВАРМАНТА

Иртрĕ çумăр. Вăл çутатрĕ
Йывăç-курăк çулçине.
Кайăк тав юрри шăратрĕ,
Юрра хыврĕ савнăçне.

Лăпкăн çĕкленсе тăрассăн
Туйăнаççĕ чечексем,
Кĕç çинçен, çемçен янрассăн —
Лантăшсен шăнкравĕсем.

Сĕртĕнме те эп хăратăп
Чĕлтĕрти çеçкесене:
Е хуллен сирсе пыратăп,
Е тухатăп çул çине.

Ярăнса кăна утатăп,
Çăмăллăн тапать чĕре.
Савнă юррăма пуçлатăп
Эпĕ хам сисмесĕрех.

Çамрăк çулçă йышĕ халĕ
Янкăр ешĕл те черчен,
Тутлăн ӳсрĕлсе каймалăх
Ача пек ачаш, чечен.

1962

■

Чĕлтĕр шуррăн чĕнтĕрлерĕ
Пахчана палан çеçки.
Асăмран кая пĕлмерĕ
Васнецов Аленушки.

Хăв эс сивĕтрĕн пулсан та,—
Чун сисет,— мана кĕтен:
Эс палан патне тухан та
Тунсăхлатăн пĕр-пĕччен...

Каçарма эп хал çитерĕп,
Тусăм, таврăнăп каллех.
Çӳрĕпĕр вара чиперрĕн
Иккĕн виçĕмçулхиллех.

Асилтермĕп нихăçан та
Сан сулмак çивĕтсене
Икĕ çул хушши никам та
Сĕртĕнсе курманнине.

Асилтермĕп тĕлĕкре те
Сан черчен аллусене
Икĕ çул хушши пĕрре те
Савнă çын тытманнине.

1959

ÇУРАЛНĂ ЯЛĂМА

Чунăмпа сан ачу пулăп ĕмĕр,
Манмăп эп савнă ял сăнарне.
Куç шармалăх çеçке çурнă çĕмĕрт
Пуçласа эп сас панă чухне.

Эпĕ сан çăкрупа кĕрнеклентĕм,
Сывă ўсрĕм эп сан имлĕхпе.
Сахал мар ирсерен эп килентĕм
Шуçăмсен кăн-кăвак тĕсĕпе...

Тăшманпа кĕрешетчĕ çĕршывăм —
Манма тиврĕ хăш чух савнăçа,
Пурпĕрех чунăма эсĕ çывăх,
Эс вĕрентрĕн савма пурнăçа.

Куç шармалăх çеçке çурсан çĕмĕрт,
Ялăмри сад пахчи асăмра.
Чунăмпа сан ачу пулăп ĕмĕр,
Юлмăп эп умăнта парăмра.

1963

Мал енче — йăлтăр хĕрлĕ чаршав,
Çутă çăлтăр путать ыйха.
Эп тăнлатăп ырми карăша —
Вăл пĕччен янратать улăха.

Сарăтут пек сап-сар чечексем
Тĕлĕреç улăх пичĕ çинче.
Ман тавра ачасем пек вĕсем
Сырăнас евĕрлех пур енчен.

Çамрăк чух такăрлатнă сукмак
Ухлĕм витĕр выртать ял енне.
Курăк пуснă ăна халь пăртак,
Сирпĕтет вăл ума кĕмĕлне...

Укăлча. Кĕренленчĕ йăмра.
Савăнсах йыхăрать такама
Шăнкăр шыв сарлака çырмара —
Те пикенчĕ мана чыс тума.

Ав çăлкуçĕ сĕнет шерпетне,
Пĕшкĕнетĕп эп унăн умне...
Тăван ял çырминчи сивĕ шыв
Ма ытла тутлă-ши, сиплĕ-ши!

1958

УЙ ХАПХИ УМЕНЧЕ

Аван-и, еплерех пурнан, тăван хапха!
Эс тахçанах сулăнайсаттăн ватлăха,
Çапах тирпейлĕ те тĕреклĕ курăнан,
Эс халь те кăмăллăн та çăмăл уçăлан.
Сана ялйышăм йăванма-тӳнме паман —
Ахальтен мар-тăр юпусем кĕреш юман.
Кунта çитсе курмассерен яланхиллех
Ачалăхри ӳкерчĕк асăма килет.
Ялйыш, урам сарлакăшпе утса тухса,
Фронта каякана яратчĕ ăсатса,
Унпа сывпуллашатчĕ санăн умăнта.
Мĕн чул çынна эс ăсатмарăн-ши кунта!
Пĕр тăрантас тулли ларатчĕç арçынсем,
Тăрать салтак ачи, алра ун — тутăрсем.
Пĕкке тирпейлĕн явнă шур алшăллипе.
Чупать-и ăйăрĕ пĕр евĕр юрттипе —
Шăнкрав сасси таçта çити ян-ян каять,
Хуткупăс хурлă юрă кĕввине калать.
Ай-хай куççуллĕ-çке салтакăн юррисем!
Пыраççĕ вĕлкĕшсе эрешлĕ тутăрсем.
Салтак ачи васкатчĕ ăсанма инçе,

Çĕтетчĕ тăрантас тӳпемĕн леш енче...
Сахал çын таврăнчĕ. Чăлах хăшпĕрисем.
Сахаллăн-и мăшрисĕр юлчĕç инкесем!..
Эп çакă пĕчĕкçĕ, сăваплă вырăна
Епле хисеп те чыс тумасăр пурăнам!
Çавăрăнса килнисемпе пуç хунисем —
Мана, пире çак телее пиллекенсем.
Хапхам, пурнас çынсем санпа пуплессине
Пуплем-и эп паян, ларса çерем çине!

1965

Сиренĕн селĕм çеçкисем
Çупкам-çупкам сенкерленеççĕ.
Çил вăштăр çĕклeнсен, вĕсем
Сулмаклăн чӳхенсе илеççĕ.

Çăра та тутлă шăршине
Инçетренех сиссе утатăп,
Сиренĕн савнăç юррине
Хам ăшăмра юрла пуçлатăп.

1964

ХЫРЛАХРА

Сарă йăрăс хыр —
Сарă каччă пек.
Киленсе çеç пыр
Сухăр шăршипе.

Чăрăш тĕл пулать
Ăнсăртран сана,
Хĕр пек ал сулать,
Ырă çул сунать.

Умĕ туллиех
Сар йĕкелĕсем,
Сар шăрçа пекех
Ытарми вĕсем...

Савнă хĕр каллех
Асăма килет,
Чун яланхиллех
Уншăн тĕмсĕлет.

1961

Çуралнă ен, çитсе курмассерен
Ума тухатăн эс тата хитрен:
Сĕвек уй-хирӳсем сарлакарах,
Парка тырпул инçечĕ сарăрах,
Хăватлăрах кĕрет ыраш шăрши,
Кăмăллăрах кĕтет хĕвел ăшши.
Сан ирĕк сывлăшу та вашават —
Унченхиллех мана кашни савать:
Эп килнĕшĕн хаваслă пулнăран
Чечек сĕнет мана чăпар çаран,
Хир саламлать тăри тăрлатнипе,
Йăмра лăпкать çемçе тураттипе.

1961

ТЕКЕРЛЁК

Çыхнă ешĕл улăх
Сарă саппунне.
Çил туртать хăюллăн
Унăн аркине.

Кӳлĕре хавассăн
Хум чупса çӳрет.
Пĕр хурланчăк сасă
Хăлхана кĕрет.

Эй, мĕн-ма, текерлĕк,
Ыткăнан çӳле,
Вирхĕнен пуçхĕрлĕ,
Çĕкленен каллех!

Чун тăваннăран-и
Чу! чăмса илен!
Мĕншĕн тем шыранăн
Канăçсăр вĕçен!

Эп сана сăнатăп
Куç ывăниччен...
Кайăкăм, сана та
Йывăр-им пĕччен!

1955

ХЕВЕЛÇАВРĂНĂШ

Çĕрулмин чăлт-шурă пуссине
Тухнă сарă тутăрлă пике.
Савăнса пăхать ана çине,
Хăяймасть татма шур чечеке.

1966

ÇУЛÇА ТАҚАНАТЬ

Çил ачи илешрĕ çăкана —
Туратсем çинче вăл ашкăнать.

Мĕн шырать-ши çулçă йышĕнче?
Мĕн тесе юрлать-ши юрринче?

Сарă çулçă çĕрелле тарать,
Çил ачи те хыçранах пырать.

Такăр çул çинче те — çулçăсем:
Карталаннă, çаврăнаç вĕсем.

Вĕлтĕр сарă çулçă хăвăртрах
Тытăнчĕ чупма вĕсем тавра —

Пытанасшăн пулчĕ вăл çилтен.
Çил ачи унран юлмасть иккен.

1965

ПИЛЕШ

Вĕрене, çăка та ăвăс
Ӳснĕ çӳллĕ, йăрăс, йăвă —
Ирĕккĕн утаймăн,
Çăмăллăн тухаймăн.

Хĕвелпе хăй нихăçан та
Витĕрех ăшăнмасан та,
Кӳршине çитесшĕн
Кармашать пилешĕ.

Туратти-çулçи сахал ун —
Асси мар-ши тесе калăн:
Имшеркке ун пĕвĕ,
Калаймасть вăл кĕвĕ.

Вăл уçланкă хĕррине-ши,
Май пулсассăн, вирхĕнесшĕн —
Курăнать салхуллăн,
Ăраскалсăр юлнăн.

Çавăнпах ир ватăлать-тĕр,
Ир хавшать те тайăлать-тĕр,
Ахлатса ӳкет вăл,
Маларах çĕрет вăл.

1967

ÇЫРАН

Леш ен çыран саламĕпе
Юпах тиха пек сиккипе
Каçаççĕ ку енне хумсем —
Почтальонсем.

Те тăнламасть хум сассине,
Те ăнланмасть хум чĕлхине,
Те пăлханать вăтаннăран —
Чĕнмест çыран.

1967

ЮМАХ

Сар йĕкĕтпе сар хĕр туслашнă,
Пĕрле пулас пек ĕмĕрех.
Сар йĕкĕтпе сар хĕр туслашнă,
Калать, тет, йĕкĕт сар хĕре:
— Шур акăш пек кермен лартар-и
Кĕленчерен те кĕмĕлтен!
Шур акăш пек кермен лартар-и!—
Савма та савăк пулĕ, тен...
— Эс çумра чух,— тет хĕр хавассăн,—
Мана пачах вăл кирлĕ мар.
Эс çумра чух,— тет хĕр хавассăн,—
Куçран-куçа пăхса ларар...
Калать, тет, йĕкĕт: — Ӳстерер-и
Парка çеçкеллĕ йывăçсем!
Калать, тет, йĕкĕт: — Ӳстерер-и! —
Иленччĕр юрăç-кайăксем...
— Эс çумра чух,— тет хĕр хавассăн,—
Мана пачах вăл кирлĕ мар.
Эс çумра чух,— тет хĕр хавассăн,—
Куçран-куçа пăхса ларар...
Хĕре сар йĕкĕт ӳкĕтленĕ:

— Акар-и хӗхӗм чечексем!
Хӗре сар йӗкӗт ӳкӗтленӗ:
— Иленччӗр сарӑ лӗпӗшсем...
— Эс çумра чух,— тет хӗр хавассӑн,—
Мана пачах вӑл кирлӗ мар.
Эс çумра чух,— тет хӗр хавассӑн,—
Куçран-куçа пӑхса ларар...
Чӗнмен, тет, сарӑ йӗкӗт урӑх,
Салхуллӑн утнӑ уйрӑлса.
Чӗнмен, тет, сарӑ йӗкӗт урӑх,
Çухалнӑ, тет, таçта кайса.
Хӗр темшӗн ӳкӗнсе хурланнӑ,
Тусне нумай вӑл кӗтнӗ, тет.
Хӗр темшӗн ӳкӗнсе хурланнӑ,
Тек курайман, тет, йӗкӗте.

1968

ЧЕЧЕКСЕМ

Цветы мне говорят...
С. Есенин

Чечексем куçран пăхаççĕ,
Чечексем çапла калаççĕ:
— Кăн-кăваккăн, саррăн, хĕрлĕн—
Çĕр те çитмĕл çичĕ тĕрлĕн,
Çивĕтри хăю пек капăр
Çĕр çинче эпир çунатпăр.
Мĕншĕн тĕлкĕшес-ха сӳрĕк!
Вăл чăн савăнăç-и кӳрĕ!

1967

КЕРХИ ЎКЕРЧЕК

Ушкăн хур çырмаран хăпарать васкамасăр,
Пĕрин хыççăн тепри — картипе.
Пăрăнса вăл иртет, манпала калаçмасăр,
Ача чух эпĕ хур кĕтмен пек.

Чĕлтĕр-чĕлтĕр сенкер таврана эп сăнатăп,
Çывăх хир те инçе туйăнать.
Çырма урлă каçса, хырлăха çул тытатăп,
Хăрнă курăк çемçен пусăрнать.

Йăрăс хыр вуллисем ылтăнланă пек сарă,
Сарă-сарă тĕс çеç тавраллах.
Ешĕлкке туратсем унăн вилĕмсĕр мар-и?—
Вĕсем çеç çуллахи тумпала.

Хушăран çеç шалта çил çўрерĕ, кĕрлерĕ
Инçетри пуйăссем евĕрлех...
Кирек хăш япала та курнать халь чиперрĕн,
Вăл тўлеккĕн кĕтет сив хĕле.

1960

АЙ, МЕН ТУРАН, ÇИЛ?

Ай, мĕн турăн, çил!
Ай, мĕн турăн эс!
Вĕрене çулçи
Ӳкнĕ çĕр çине.

Ӳкнĕ хуçăлса
Лапсака турат.
Халĕ вăл шанса,
Сивĕнсе пырать.

Тăснă вĕрене
Çулçине илме
Сывă аллине —
Ах, инçе çитме!..

Мĕншĕн, çил, тăран
Эс пуçна чиксе! —
Е асапланан,
Айăпна сиссе!

1967

ТАРИ

Сана юратнăшăн мана
каçар эс. Калама ан чар.

Г. Айхи

Эсĕ çĕмĕрт çеçки пек таса,
Эсĕ çĕмĕрт çеçки пек чечен.
Эсĕ ман чун ăшши те асап,
Эс пуртан ман кун-çулăм ĕлккен.

Тунсăхланă çап-çамрăк чĕрем
Çурăлан папка пек вăй илет.
Ырă чун ăшшине туйнăçем
Ырăрах ман пулассăм килет.

Эп ĕненнĕ эс тĕл пуласса,
Эпĕ кĕтрĕм сана халиччен...
Эсĕ çĕмĕрт çеçки пек таса,
Эсĕ çĕмĕрт çеçки пек чечен.

■

Васкама сунманăн
Çамрăк кăмăла
Пучахсем картланă
Ман утмаçула.

Вĕсене сиретĕп,
Ăшшăн сĕртĕнсе.
Тĕмсĕлсе кĕтетĕп
Эсĕ килессе.

Чечексем лараççĕ,
Кăвак хĕм тăкса.
Тăрисем юрлаççĕ,
Курăнми кайса.

Манаймастăп эпĕ
Ытарми ятна.
Манăн чунăм çепĕç
Енĕрлет ăна.

Сан яту ачашшăн
Çĕн кĕвве куçать...
Сирĕн ялăр ма-ши
Илĕртрĕ куçа?

Сан валли пухатăп
Эп утмăлтурат.

Эс мана çапах та
Маннăн туйăнать.

Тăрисем юрлаççĕ,
Курăнми кайеа.
Çавăн пек пулса çеç
Юлăн-ши аса!..

Манаймастăп эпĕ
Ытарми ятна.
Манăн чунăм çепĕç
Ĕнĕрлет ăна.

Ятна пĕрвĕçĕм асăнатăп,
Каллех ман сывлăш — эс, эп — сан.
Эп тăлăххăн тăрса юлсаттăм,
Эс ним чĕнмесĕр уйрăлсан.

Садсем шап-шур çеçкеленсессĕн,
Чăн туссăр пурпĕр кичемрех.
Пĕр сивĕнсе тепре хĕрсессĕн,
Çĕн кăмăл-туйăм вĕрирех.

Эсĕ — пурнăçăм чечекĕ,
Ĕмĕр çеçкери чечек.

Эсĕ — чун-хавал тĕрекĕ,
Иксĕле пĕлми тĕрек...

Ылтăн хумлăн чӳхенейрĕ
Сарă хир унченхиллех.
Каçарсамччĕ — тӳсеймерĕм,
Çитрĕм сан патна каллех.

Çывăхри çурта кураймăн —
Чарăна пĕлмест тăман.
Эсĕ çырусем те ямăн,
Килмĕн ман пата нихçан.

Тен, хăш чух çапах асилĕн
Тахçанхи тусна савса,
Кĕтĕн ăнсăртран каçкӳлĕм
Чечекпе эп пырасса.

Пĕлмĕп эп те — хăш çул урлă
Çӳрĕн эсĕ инçетре.
Пурпĕр сан çинчен эп юрлăп,
Çумăн утăп ĕмĕтре.

Çакă туйăм çухалманшăн
Эп тав тăвăп пурнăçа...
Тус пулсассăн та эс маншăн,
Килмĕн ман пата нихçан.

■

Эс мана кӗтетӗн-ши
Е мантăн-ши йăлтах!
Эс ӗмӗтленетӗн-ши
Пӗрле пулма татах!

Чи ачаш сăмахăма
Хальччен эп каламан.
Çăмăл-им пӗччен юлма,
Чуну кӳтмест-и сан!

■

Сар ыраш пусси тăпах,
Пучахсем, хур пек, пуç уснă.
Ик чуна утмаçулпа
Çӳреме аванччӗ туслăн.

Йывăррăн выртатчӗ сан
Кăн-кăвак хăюллă çивӗт.
Туйăму таса юлсан,
Чăн юратăва эс тивӗç.

Тăрисем юрланă май
Пурçăн пек ăрша юхатчӗ.
Хӗн килсен те, пӗр пулма
Кăмăлу хӗрсе тăратчӗ.

Çитнĕ ĕмĕт пек ялан
Асăма килетĕн эсĕ:
Çумăмрах пек туйăнан,
Туйăнан сăмах чĕнессĕн.

■

Санран нимле парне те çук ман —
Кĕске çырăвусем кăна.
Ан тив сана эп урăх тупмăп,
Çапах пăлхатăн эс чуна —

Çырăвусен кашни сăмахĕн
Вăтанчăк ăшшине илсе,
Çĕнтерĕп çил вăйне пайтах эп,
Чарусăр тăвăла лексе.

■

Тен, тĕл пулăп тетĕп,
Станцăра çӳретĕп.
Ыр сăнна курасчĕ,
Лăпкăн калаçасчĕ.

Пурнăçу епле-ши! —
Эп çавна пĕлесшĕн.
Ăшшăн ал тытасчĕ,
Лăпланса каясчĕ.

■

Сан патна пыраймăп,
Кĕтмĕн эсĕ те.
Эс нихçан туяймăн
Манăн ĕмĕте.

Ăнсăртран асилĕн:
«Пурччĕ пĕр ухмах...»
Варкăшса çил килĕ
Кăмăлна уçма.

Вăл çапах чĕртеймĕ
Сӳннĕ сăнара,
Ним те систереймĕ
Ман пирки вара...

Умăнта хăймасăр
Каçару ыйтма —
Çӳрĕп лăпланмасăр,
Айăплăп хама.

Калăп эп хам тĕллĕн:
Çук вăл — каçару!
Ман чунà эс пĕлмĕн,
Çырмăн эс çыру.

■

Эп çӳретĕп каллех вăрмана,
Чун уçса калаçма — йывăçсем.

Туратсем ыталаççĕ мана,
Çупăрлаççĕ мана çулçăсем.

Калăн, тусăм, илтетĕп сана —
Кайăксен те сасси вашават.
Вăрманпа пуплесен пĕр кана,
Манăн тунсăх таçта çухалать.

Сана тупаймăп пурпĕрех,
Сас çĕтиччен чĕнсессĕн то.
Пĕрле тухаймăп уй-хире
Çулла та, кĕр çитсессĕн те.

Мĕнле çил юхăмне кĕрсе,
Мĕнле çулпа иртетĕн-ши!
Чунна мĕнпе çĕклентерсе,
Мĕнпе йӳнеçтеретĕн-ши!

Халтан кайса ӳкме тивсен,
Тӳсĕмлĕхӳ ӳсейтĕрччĕ.
Чи ырă шанчăку сӳнсен,
Вăл тепĕр хут чĕрлейтĕрччĕ.

1959—62

ТИВЁҪ

Ленăпа Ирăна халаллатăп.

Тӳпе кĕленчи янкăр тăрă —
Те çумăр тасатнă çуса.
Хумсем тăван уй-хир тăрăх
Иртеççĕ сулмаклăн чупса.
Вăрман пек сип-симĕс ялăм
Çĕкленчĕ тӳпем хыçĕнчен.
Курнать вăл пысăк хапхаллă,
Хапхи халь юсавлă иккен.
Тĕреклĕ — çуртсен ик ĕречĕ,
Ем-ешĕл — йăмраллă урам.
Унччен йывăçсем те имшерччĕ,—
Çапать имлĕ шăршă садран...

Яла тавраннатăп та — чунăм
Туртать улăхри урама.
Унта каймасан — айăп тунăн
Час-час ӳпкелетĕп хама...
Чĕрем ыратса пăчăртанчĕ
Сăваплă çĕре çитнĕçем.

Асра арăш-пирĕш вăранчĕç
Ача чухнехи кунсем.
Пĕр вунвиççĕри хура сăн
Хастарлăх чĕртесшĕн манра.
Кĕçех вăл сăмах хушассăн
Мăнаçлăн тăрать умра.
Йăлтах ашшĕне-мĕн вăл хывнă.
Ӳсмен ашшĕне эп курса —
Килте сăнӳкерчĕкĕ юлнă,
Ларать мучи тӳррĕн пăхса.
Пӳ-сийĕ тулли те патвар ун.
Куççем çиçĕм евĕр кăра —
Пĕр ăшшăн вĕсем, пĕр хаяррăн
Сапаççĕ чунри кăвара.
«Чиркӳ те хуптарчĕ-пăстарчĕ
Колхоз тунă чух ялсенче.
Турра мăшкăла хăварчĕ,
Хĕрӳллĕччĕ çав ĕçĕнче.
Анчах вăрçăран килеймерĕ —
Турри çавăрмарĕ-и, тен...» —
Çапла сăмахларĕç-пуплерĕç
Хăшпĕр карчăксем ун çинчен...

Хаярччĕ сивви кăрлачăн,
Пралук ян янратчĕ çинçен.
Шур кĕрт те хытса саралатчĕ,
Вĕçетчĕ чакак пĕр-пĕччен.
Васкавлăн чупса эп ансаччĕ
Ун чух çак чунтуртмăш çĕре...

Вĕсем мунчара пурăнатчĕç
Вутти çитменрен сивĕре.
«Атте парса ячĕ...» — теме эп
Çеç тăтăм мала иртнĕçем —
Шывланчĕç куçсем кинемейĕн,
Чĕтренчĕç сиксе тутисем.
Тăватă пуç шăрпăк та супăнь...
Нумай кирлĕ мар этеме.
Ун чух вĕсене ăçтан тупăн! —
Пурри те тăратчĕ теме.
Тин çеç-ха хура рейхстаг çийĕн
Çĕкленнĕччĕ хĕрлĕ ялав.
Хире тивĕçместчĕ ĕççынĕ,
Ар йыш тивĕçместчĕ яла.
Пӳрт-çурт ватă çын пек тайлăк,
Тумтир те çӳхеччĕ çире.
Ахаль-и тăватă çулталăк
Вут-çулăм хуплăрĕ пире!
Кам çĕрнĕ йӳçек çĕрулми те
Ун чух пуçтармарĕ хирте!
Тăратчĕ тапса хĕнлĕх витĕр
Çапах чĕрĕ пурнăç пирте...

Эх, Витя, Виталий тăванăм!
Эс хаклăччĕ ыр пиччерен.
Çӳрес çеç пĕрле халĕ санăн,
Пуплесчĕ çеç чун-чĕререн.
Анчах мур илесшĕ вăрçă
Инкекĕ-çке çирĕ пуçна.
Сăлтавсăр-и сывлăх сан хăрчĕ! —

Хĕн кун чире ертрĕ сана...
Эс марччĕ-и вăл юрататтăн
Пулла çӳреме Шетмĕне!
Çулла выртмана ăнтăлаттăн,
Саваттăн мучи юмахне.
Пĕве анлăшне эс яраттăн
Хăй тĕллĕн ишен карапсем.
Улма йывăçсем те сыпаттăн,
Çыраттăн хивре сăвăсем.
Эсех ӳкермешкĕн хавасчĕ
Ĕлккен асамат кĕперне...
Эс кам кăна мар-ши пуласчĕ
Тееттĕн çунса ун чухне!
Мĕн-мĕн çеç тытмастчĕ сан алă —
Хитре ăсталаттăн ялан.
Пилленĕччĕ-тĕр çутçанталăк
Сана иксĕлми талант.

Шăн çĕр талккăшпех чĕлтĕр юрлă,
Вăрман çаралса хуралать.
Çав кун ял ăсатрĕ хурлăн
Сана юлашки çула.
Йытту хурланчĕ-эрленчĕ
Сĕм-тăлăх ача евĕрлех.
Куçран, йăлăнса, вăл тинкерчĕ,
Сана эп таврас пек калле...

Килтех кинемейĕм. Хăнашăн
Сăра вăл ăсать пичкерен.
Пăрахрĕ ĕçне, пăхать ăшшăн,

Ыйтать манăн халăм çинчен.
Кервен пӳ-сине ват сăн çапнă,
Йĕрсем ун йышланнă питре —
Сахал-и хĕн кун вăл тыр акнă
Е каснă вăрман сивĕре!..
Каллех ывăлне аса илчĕ:
«Пĕрле çеç çӳрейĕттĕр,— тет.—
Хамран кăна мар-çке килчĕ...
Çуллен хамăр ял халь ӳçет,
Кăçал тулăхрах тырпулсем те,
Тулли кăн-кăвак ларать.
Тĕнчи тăнăç тăтăрччĕ ĕнтĕ,
Ытти пурте пулĕ вара...»

Ката сулхăнне эп кĕретĕп,
Сарать пыл шăрши çăка.
Виталий лартнă ĕретĕн
Мĕнпур йывăççи парка.
Мĕскер-ши тата вичкĕнреххĕн
Илет пĕçертсе чунăма.
Хытартăм хама хивререххĕн
Ыр ĕçшĕн вут пек çунма...
Тӳпе кĕленчи янкăр тăрă —
Те çумăр тасатнă çуса.
Куккукăн сасси çырма тăрăх
Саланчĕ ламран-лам юхса.

1958—62

ÇЕÇЕНХИР КЕВВИСЕМ

Эпир ачаш пулса ӳсмен,
вёреннё тивёçе туймашкăн.
Г. Айхи

«Яшлăху мёнпе-ха паллă,
Сан мёскер пур мухтанма!»—
Тенё чух çакна эп калăп,
Çакă пулё ман сăмах.
I
Йăлтăртатрё кёмёл Атăл,
Янăрарё ун кёперё.
Кăмăлларăм Урала та:
Тунсăхлатăп сансăр, терё.

Ешёл сăрт-ту сёвемё
Юмах пек манра тёрленчё.
Сарлака çаран тӳремё
Йывăр хумсемпе чӳхенчё.

Е вуншар завод капмаррăн,
Е çёршер кермен тёл пулчё —

Чĕререн савса сăнарăм,
Хĕпĕртерĕм, кăмăл тулчĕ.

Чун хĕрет çĕршывшăн манăн
Вăй хума тата хавассăн.
Вăл ăçтан-ха чаплăланĕ,
Эпĕ ал усса ларсассăн!

II.

Пĕлĕт мар — кăвак тусем çĕкленнĕ
Кăнтăрти сенкер тĕтрелĕхре.
Çеçенхирĕн кĕввине итленĕн
Хускалми лараççĕ инçетре.

Çаврăнса юхать Чарыш пăлхавлăн,
Ыткăнса килет вăл ту çинчен.
Чӳхенмешкĕн сĕлтĕ пек паха вăл,
Уçă унăн сив ытамĕнче.

Ашкăрмасть йӳç армути вăрманĕ —
Сĕрĕшет сар тулă çил çинче.
Сарлака хумсен пиншер йăранĕ
Çуталать хĕвелĕн питĕнче.

III

Эй, чарăн, чарăн, çумăр!
Курмастăн-им, ара:
Выртать сар тулă хумĕ
Сана пула уйра.

Вăл çĕкленеймĕ ырăн,
Чăлханнă, лап ӳксе.
Вăхăтсăрах-и тырăн
Пĕтме тивет çĕрсе!

Çăватăн эс пĕрвĕçĕм,
Тавралăхра — тĕтре.
Пĕр тунсăхлă кĕвве çеç
Тăсатăн ирĕкре.

Хальччен те-и ырмарăн!
Пире тĕрĕслеме
Асмашкăн-и шутларăн! —
Май килмĕ çĕнтерме!

Лармастпăр-ха — ĕç пур-тăк,
Пăхмастпăр çумăра...
Эй, хăлхунтан ак туртăп,—
Асту, ан çĕрт тырра!

IV

Янкăр тăрă кĕçĕрхи çанталăк,
Сарă тул пĕрчи пек — çăлтăрсем.
Çывăрма-и васкĕ çамрăк халăх! —
Ывăннă шăмшак тăрать хĕрсе.

Юрăсем хирти станра янраççĕ,
Лампа çутатать юпа çинче.
Шăплансах пире тăнларĕ каçĕ
Сулхăн çеçенхир талккăшĕнче.

Аҫăлăмăр халĕ инçерен-ши
Хамăр кĕвĕ-çемĕ хаклăрах!
Ак «Ан аваň, шĕшкĕмĕр» пикенчĕ
Аваňмашкăн пирĕн юрăра.

Вальс кĕвви хускалчĕ-и ачашшăн —
Варкăшрĕ хĕрсен кĕпе арки.
Хававрах-ши пултăр терĕ ташă —
Тахăш тем шаккать чăнкки-чанкки.

Сывлăш сулхăн. Лăпкă — август каçĕ.
Çăлтăрсен вăйăн пырать хĕрсе:
Пĕрисем пĕрвĕçĕм хĕм тăкаççĕ,
Пучах пек ӳкеççĕ теприсем.

V

Машин-трактор çитет те,
Çын çитмест-çке-ха, мур!
— Тракторист кирлĕ тетĕр!
Хам ĕçлем,— тет Якур...

Ак управлăň, тирпейлĕň
Жаткăпа тул çулать.
Ун паккусĕ йĕркеллĕ,
Вăл тип-тикĕс юлать.

Ӳкес çук сывлăм кĕçĕр —
Ăшă çил варкăшать.
Ăнăçать каччă ĕçĕ,
Хăй йăлт пиçнĕ ăшша.

Апата таврăнмашкăн
Ан тив кĕтчĕр станра.
Хир тавра çаврăнмашкăн
Вăл пăрахмĕ вăрах.

«Эй, ан ывăн эс, фара,
Хĕвел евĕр çутат!
Чуп эс, жатка, хастаррăн,
Пултарсан — çĕр хута!..»

Йĕкĕт ларнă та çирĕп,
Варт! пăхать çаврăнса.
Тепĕр ĕçлĕ кун ирĕ
Çĕкленет ыр сунса...

Якур тутлăн çывратчĕ
Ирхине нар çинче.
Ак ăна ушкăн каччă
Вăратать ыйхинчен.

Шавласа ывăтатпăр
Хайхине сывлăша.
Савăнса саламлатпăр
Паттăра-тантăша:

«Çывăрма ĕлкĕретĕн!..
Ну маттур та, Якур!
Халь кăшт кан, тĕлĕкре те
Сарă хĕр эсĕ кур!..»

Вăл канма шутламарĕ,
Вăтанать тем пирки.
Апата çеç васкарĕ —
Кĕтет мар-и жатки!..

VI

Вут-хĕвел пĕçертрĕ кунĕпех,
Кунĕпех йĕтем кĕрлерĕ.
Явăнчĕ тусан сăр тĕтĕм пек,
Сирĕлсе пĕте пĕлмерĕ.

Машинсем хиртен çине-çинех
Тырăпа килсе тăраççĕ.
Зернопульт та хăй киленĕвне
Халь курать ăмăртура çеç:

Тулă пĕрĕхет те пĕрĕхет
Çил çине вăл чарăнмасăр.
Вăхăт шутлă, пултăр перекет,
Тенĕ пек янрать пур сасă.

Вылянать ман аллăмра савук,
Кĕреçе хăш чух тытатăп.
Уй куçлаймăн эсĕ — вăхăт çук,
Тыр тултса лачкам тарлатăп.

Тĕттĕме касса машин уйра
Йăр та яр çеç çутатать-и,
Е вăр-вар тус-тантăшăм çумра
Тырă ăсатма васкать-и,

Е комбайн хамăр çывăхра
Пĕр пек тикĕссĕн кĕрлет-и —
Янраса тăрать тавралăхра
Еçĕн шавĕ сĕм çĕрле те.

Тырă кăшăлĕ — йĕтем тулли,
Сарă кĕрт пек çÿллĕ, вăрăм.
Вăл ан пултăр çумăрсен кулли,
Шăл çыртса эс халĕ тăрăш.

Асилтерчĕ улăп тăприне
Сăвăрса тасатнă тырă.
Савăнса пăхатăн ун çине,
Пилĕк ыратни те ырă.

Çăкăр мĕн тути каланине,
Йÿнĕ маррине ун хакĕ
Лайăх туйрĕ çакăнта тинех
Пĕтĕм чун-чĕрем, шăмшакăм.

VII

Пирĕнпеле пĕрле
Пирĕнни пек ĕçре
Ырмастăр-и, хĕрсем,
Эсир куллен!
Йывăртарах та-и
Тивет хăш чух сире —
Пĕри те найкăшмасть
Çапăх сиртен.

Ир пуçласа каçчен
Тыр тиесе, тултса,
Тен, ыратаççĕ пуль
Пилĕкĕрсем,
Çĕр каçиччен алсем
Çитеççĕ пуль хытса —
Кашни сехет хистет:
Пыр ĕлкĕрсе!

Курнатăр ар йыш пек
Кунти хĕрӳ ĕçре
Эсир йĕлтĕрçĕсен
Кив тумĕпе.
Хастар, таса куçсем
Тусанлă сăн-питре
Мĕн-ма çиçеççĕ-ши
Çав тер чипер!

Сире кура эпир
Нумай тӳсĕмлĕрех,
Пире çăмăлтарах —
Сире кура.
Пуриншĕн те тавах,
Пикемĕрсем, сире!
Телей çутаттăрччĕ
Кун-çулăра.

VIII

Пĕр пĕчĕк ту пек улмури.
Виçетĕп урлăш-тăршшĕне.

Сарай пек çӳллĕ ун тăрри,
Сисетĕп улăм шăршине.

Ик ал сăрăлтатать, вĕри,
Ăçтан-ши вăйĕ аллăмсен!
Епле ман сенĕкĕм аври
Шарт хуçăлмарĕ халиччен!

Чăнах çапла пулмарĕ-и,
Çак туйăм тĕрĕсех-и, тен:
Ман евĕр пĕчĕк — улмури,
Ун евĕр пысăк эп, кервен.

IX

Те çур çĕр çывхаратчĕ,
Пĕри килсе кĕрет:
— Пуçтарнăр улт-çич каччă,
Халех, часрах хире!..

Машин çинче пур улăм,
Ларса пыма аван.
Хĕре плащпа хăюллăн
Хӳтĕлеме ан ман...

Рет-рет çăра выртатчĕç
Упа пек купасем,
Халь çеç-ха çывăратчĕç
Кăшт хутланса вĕсем.

Ав ялкăшма пуçларĕ
Пĕри — вут тĕртсенех.
Кур, хĕрлĕ автан мар-и
Сикет теприн çине!

Сенĕкпеле чупатăн
Эс вут-кăвар йăтса.
Кĕç виççĕмĕш купа та
Пал! çеç илет хыпса.

Тара ӳкетĕн эсĕ
Вĕри çиле пула.
Хĕмсем çӳле вĕçеççĕ,
Тавра — вутри хула.

Çакна, ним шутламасăр,
Малтан сăвса пăхан.
Кайран вара ним майсăр
Чунтан пăшăрханан...

Эй, тракторсем, ан чарнăр
Сухалама хире.
Купасене çунтарнă,
Халь ирĕк çуя сире!

X

«Яшлăху мĕнпе-ха паллă,
Сан мĕскер пур мухтанма!» —
Тенĕ чух çакна эп калăп,
Çакă пулĕ ман сăмах.

Упранать килте тирпейлĕн
Манăн пĕр чипер медаль.
Ан çуталтăрин хĕвеллĕн —
Кунсерен вăл хаклă халь.

Сарă тулă, ешĕл улăх
Тĕсĕсем пур ун çинче.
Вăл пуртан темле хăюлăх
Вăранать чун тĕпĕнче.

Вашлатса кăна пыраççĕ
Пуйăссем ман асăмра,
Çутăсем çĕрле ялтраççĕ
Тикĕс çĕрлĕ Алтайра.

Ывăна пĕлмест комбайн,—
Шав виçет хир тӳремне.
Эс тусан хуплана майăн,
Ĕлкĕр, тăк ун улăмне...

Ҫаврăнать киле яш-кĕрĕм
Паттăрлăх ялавĕпе.
Савнă халăх ывăл-хĕрĕ
Ыр ят илчĕ ĕçĕпе.

Пин çынран ытла чыс турĕ
Медальпе çĕршыв пире.
Ахаль мар-тăр çав маттуррăн
Тĕрекленчĕ хул ĕçре...

Аллă çиччĕмĕш çул çеç-и
Эпĕр хĕрнĕ Алтайра!
Пирĕн çул-йĕрсем иртеççĕ
Кăнтăрта е тайгара.

Яшлăх иртрĕ шахтăра та,
Е çĕклерĕ çĕн хула,
Е çуралнă Чăвашра та
Вăл тарларĕ çав майлах.

Тивĕçе манман янтишĕн,
Аттесен ятне яман.
Комсомолăм, савнă йышăм
Пултăн мар-и эсĕ ман!..

«Яшлăху мĕнпе-ха паллă,
Сан мĕскер пур мухтанма!» —
Тенĕ чух çакна эп калăп,
Çакă пулĕ ман сăмах.

1967—68

ТУПМАЛЛИ

Çеçпĕл 3
Хурама 4
Аннене 5
Анлăланĕ Атăл 7
Шурă çумăр 9
Çул çинче 10
Кун пек пахи мĕскер пур-ши! . . . 11
«Ан тив асать шап-шур çанталăк...» . . 12
«Лăпкă кăвакарчăн...» 13
Курак тăманĕ 14
«Утса çӳрер урамсемпе...» 16
«Хĕвел вăратрĕ те каллех...» 17
«Хĕрхĕлтĕм, хĕрлĕ, кăвак...» 18
«Асилетĕп эс чуптунине...» 19
Çурхи вăрманта 21
«Чĕлтĕр шуррăн чĕнтĕрлерĕ...» . . . 23
Çуралнă ялăма 25
«Мал енче — йăлтăр хĕрлĕ чаршав...» . . 26

Уй хапхи умĕнче 28
«Сиренĕн селĕм çеçкисем...» 30
Хырлăхра 31
«Çуралнă ен, çитсе курмассерен...» . . 32
Текерлĕк 33
Хĕвелçаврăнăш 35
Çулçă тăкăнать 36
Пилеш 37
Çыран 39
Юмах 40
Чечексем 42
Кĕрхи ӳкерчĕк 43
Ай, мĕн турăн, çил! 44
Тăри 45
«Эсĕ çĕмĕрт çеçки пек таса...» . . —
«Васкама сунманăн...» 46
«Ятна пĕрвĕçĕм асăнатăп...» . . 47
«Эсĕ — пурнăçăм чечекĕ...» . . —
«Çывăхри çурта кураймăн...» . . 48
«Эс мана кĕтетĕн-ши...» . . . 49
«Сар ыраш пусси тăпах...» . . . —
«Санран нимле парне те çук ман...» . 50
«Тен, тĕл пулăп тетĕп...» . . . —
«Сан патна пыраймăп...» . . . 51
«Эп çӳретĕп каллех вăрмана...» . . —
«Сана тупаймăп пурпĕрех...» . . 52
Тивĕç 53
Çеçенхир кĕввисем 58

7—6—3.
118—68М

ТРОФИМОВ (ЮМАРТ) ГЕННАДИЙ ФЕДОРОВИЧ

ДОЛГ

Стихи

На чувашском языке

Оформление художника Э. М. Юрьева
Редактор М. П. Егоров.
Художественный редактор Э. М. Юрьев
Технический редактор В. И. Павлова
Корректор Г. В. Лукоянов.

НТ 11694. Сдано в набор 1-VII-1968 г.
Подписано к печати 24.XII-68 г. Изд. 118/68.
Формат 84×108 1/64. Типографская № 3.
Физических печ. л. 1,125. Условных печ. л.
1,89. Учетно-изд. л. 1,73. Заказ № 3716.
Тираж 3000 экз. Цена 17 коп.

Чувашкнигоиздат,
Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Управления по печати
при Совете Министров Чувашской АССР
Чебоксары, Володарского, 5.